# КАПКĂН

„Çуракине иртерес ĕçре хăш-пĕр тĕлте йал.енђи (р.канисатсисем пĕрпĕрнипе çыхăнса ĕçлени сахал“.
(Çы.усэнђен).



Биçĕн хаpăс кÿлĕнсэ
Ик туртаран туртмасан,

Тийевлĕ лав нихçан та
Хускалас çук вырăнтан.
„Ђăваш крыловĕ“

N 6
87

# Менелник саламӗ.

*САЛАМ, ПУРНЕ ТЕ САЛАМ!*

*Темиçе арӑмпа пурнакансене, ӗçме йуратакансене, волокиттӑлла выӡакансене аӡине арӑмӗнӡен вӑрттӑн тӗне кӗртекенсене, çынран вӑрттӑн турра кӗлтӑвакансене, пуçлӑх урине çулакан потхалимсене, кашни ир сулахай ура çине пусакансене, хуликансене, тӗрлӗрен киревсӗр ӗç тӑвакансене, ӗçкӗ шӑршине сакӑр çухрӑмран çисекенсене, тӑтӑшах йе хутран-ситрен вçаткӑ илекенсене, шултрисемпе вак растратӡӑксене, утӡрештенисенӡе куммашса кайнӑ çынсене тата ыт. те, тата çавӑн пек йурӑхсӑрсене пурне те „Капкӑнлӑ" салам!*

*„Капкӑна" çакланса тӡыс курнӑ, тата малашне çакланмалла мӗн пур паллӑ çынсене,—вӗсем тӡӑвашне, тутарне вырӑсне, ирçине, çармӑсне пӑхмасӑрах вут пек хӗрӳллӗ, коркоп столовӑйӗн сакӑр çул хӑйраман çӗççи иек çиӗтӡӗ салам!*

*Салам сире, пурсӑра та салам!*

*Ыран кил текен пӳрократсене те салам!*

*Çӳлте асӑннӑ паллӑ çынсем етем йеçӗрлӗ мӗлкесем респуплӗкри ӗçхалӑхне култарма çуралнӑ. Вӗсем пирки „Капкӑн" пилӗк пине çитрӗ. „Пиллӗк çуллӑха йышӑннӑ план тӑрӑх" 1930-мӗш çулӑн март уйӑхӗнӡе «Капкӑнӑн» 6(111)-мӗш номӗрӗ 10.000 çапӑнса тухмалла. Кӑçал пилӗк пин çын кулаççӗ пулсан, килес çул вунӑ пин çын куласа кулмалла пултӑр.*

*Кӳлӗр ман пата мӗн пур совухмахсем! Епе сире пӗрерӗн пӗрерӗн тытса йӗплӗ çӑмах хыптарса йарам. Вара есӗр, „Капкӑн" пиллӗке кайнине çавӑнтан сисӗр.*

*Сире сурӑх кашкӑра йуратнӑ пек йуратакан* „КАПКӐН".

# Мӗне пӗлтерет çак йапала.

Менелник ыран пулат̆ тенӗ каç „Капкӑн" комуннай мунӡинӡен таврӑнӡӗ те, —пӗр йайӑх çӑвӑрса илемха, тесе кутник çине тӑсӑлса выртрӗ.

— Çулталӑкра пӗрре канасах пулат̆, терӗ.

Айри çӗтӗк сӑкман çепçемçе. Шартлама сивӗ пӳртре çав тери ӑшӑ... Мунӡа хыççӑн ӗшеннӗскерӗн куçӗсем ӡасах хупӑнӡӗç.

Çывӑрма выртсан хӑт̆ мӗнле атминистраттӑр та тӗлӗк курат̆. Тӗлӗке ӑна укçа парса илмелле мар: пуриншӗн те песплат çпектаккӑӡ вӑл. Ана комиссар та, санитари комиççин кӗçӗн ӡленӗн аслӑ самеçтиттӗлӗ те курат̆.

„Капкӑн" та тӗлӗк курат̆...

... Шартлама сивӗ хӗл пек. Ун пек хӗл вихçан та пулман,—сурса сурӡӑк ӳкмест,—çӑмӑр ӡӗресрен йанӑ пек йарат̆. Аслати çиçӗм çиççе ахӑрат̆. Иурӑ ӑсти—шӑпӡӑк çӗмӗрен çӗнӗ йуррине кармонилет. Ӑшӑ лапка йур асӑр-писер çаврӑнат̆. Карттин!.. Каснӑ лартнӑ, пирӗн писсаттӗлсемпе поетсем çырнӑ калавсемпе сӑвӑсенӡи пекех.

— Мӗн, çӑвалла аваллӑх (истори)!—тет „Капкӑн".

Таçта, айакра: оу!.. оу!—тенӗ сасӑ илтӗнет. Кӗтӳ аӡи пек кӑшкӑрат̆. Вӑрӑм ӡӑпӑркка сасси те илтӗнет.

Вӑйлӑ çӑмӑр хыççӑн куç уçайми тусан сиксе тухрӗ.

— Ну, çанталӑк!—тет „Капкӑн".

„Капкӑн" лаççин алӑкӗ шатӑртатма пуçларӗ—такӑшӗ хирет.

— Ӳç!

— Тавай!.. Тавай кунта!

Шатӑр-рр!—тӑват̆ алӑк.

— Епӗ малтан килнӗ. Ман ӡерет!

— Каккуй унга „ӡерет"?!

— Епӗ йарса илеп малтан, ес мар!

Алӑк тепӗр хут шатӑртатрӗ те, лошт! çурӑлса карӗ.

Пӑхат̆ „Капкӑн" та, курат̆:

. . . . . . .   . . . . . . . . . . .

---

**Вулакан йулташсем! „Капкӑн" мӗне пӗлтерекен тӗлӗк курнӑ?**

Кам çак тӗлӗк мӗнне пӗлтерни çинӡен майӑн 1-мӗшне çитиӡӡен тӗрӗс çырса йарат̆, тата унпа пӗрле пӗр çулталӑка 2 потписӡӗк тупса йарат̆,—вара çавна „Капкӑн" пин пысӑк парне йарат̆.

Тӗлӗк мӗне пӗлтерни çинӡен, тата 2 „Капкӑншӑн" 2 тенкӗ укçа (пуштӑ марккипе) канверт ӑшне ӡик те: г. Чебоксары, Конторе газеты „Канаш" тесе çырса йар.

## Мӗн пур тусӑмсене.

„Капкӑн" тусӗсем тахçанах калатӡӗç: —«Капкӑн» пиллӗке кайнине пысӑк менелник тусах асӑнас, тетӡӗç.

Менелник гума салат-хӑмли те пулмарӗ те,—хӑна пуçтарса ӗçкӗ тума шухӑш тытмарӑмӑр. Ун вырӑнне „Капкӑн» хӑй тусӗсене тем пысӑккӗш салам йарат̆. Тусӗсенӡен «Капкӑн» килес çул çак вӑхӑта çитиӡӡен вунӑ пин потписӡӗк пуçтарса пама ыйтат̆. Унтан тата, йалтипе хулари вирлӗрех ӗççем çинӡен çырса тӑма хушат̆.

„Капкӑн".




Ку карттин мĕне пĕлтерннне ăнлантарма та кирлĕ мар, ахалех курăнат вăл.

# Йĕкĕлтесçĕ те, вăрçаççĕ те—хăрушă.

Февраль—сивĕ йăкăлти сивĕ уйăх. Кантăксем пăрланнă: шупшурах лараççĕ. Сивĕ. Çапах та Турхан (Хĕрлĕçутай р.) сыннисем çураки çывхарнине сисеççĕ. Трийĕр килкиве кура вăрлăхлăх тырăсене тасатма хатĕрленсех тăраççĕ.—Пайап-ыран пулăшком тыррине суртласа пĕтереççĕ те, трийер йал тăрах тухмалла,—теççĕ.

Вулав çурчĕ кинкартинче пулăшком кăнтăр умĕнче: ăр-р-р-рр!.. ăрлаттарса, трийĕрпе тырă тасатат. Кулă, калаçу...

— Кришша, пайан 50 пăт суртларăмăр.—айтăр, вулав çуртне кĕрсе ăшăнса тухар! Кĕрре ăшăнса тухсассăн тепĕр 50 пăтне тасататпăр,—терĕ пулăшком предсетатттĕлĕ Уливан Иармулли.

— Айтăр!—терĕ пулăшком членĕ Невук Петĕрĕ те.

Алăсене вĕркелесе, шăнса хытнă çăпатисене таклаттарса, вулав çурчĕ алăкне çитрĕç. Туртаççĕ алăка. Çук, алăка шалтан питĕрнĕ.

— Уçăрха!.. шăнса карăмăр!

Ну к чертам вас!—терĕ вулав çуртпуçлăхĕн арăмĕ.

Кунти чăвашсем «мат-мат» сăмахсене 2 хутлă каласа йатлаçаççĕ пулсан, вулав çуртпуçлăхĕн—Ортаков майри 7—8 хутлăнах çитерет.

— Каттатıес, чувашла пыйтăсем! тесе сыпăçтарат. Унчен те пулмаçĕ алăк—шăнкăрт! турĕ. Ортаковăн вырăсла чăвашла хутăш майри пуртă йатса тухса кĕçех Петĕре касаймарĕ. Кăна кура пурте шкула тарса çитрĕç. Вырăнти учителĕсемпе ку ĕç çинчен калаçса лвраççĕ,—ăшăнаççĕ.

Хĕрсе кайнă майра шкула персе çитрĕ. Йатлаçат, кăкрине çапат, çĕр çинче нурçук усала асăнса:

Иа вам покажу как пăççиловат... камые ĕç тума шухăш тытали, тесе хучĕ.

Кун хыççăн упăшки те персе çитрĕ.

— Есĕр ман арăма пăмăс ĕç тума пусахланă!.. Сут, сут!—тет Ортаков.

Çатăртатат Ортаков:

Ыравах сут пулат. Сутне хамах тăватăп!—тет.

— Пулăшком членĕсем хăраса ӳкрĕç: примириттĕлнăй камĕрă пуçлăхĕха вĕт, пĕтерет ку пире,—теççĕ.

Кам пĕлет, «усал куçран пăхса килмест,» тенĕ. Хăтланĕ.

Çапла хатĕрленетха çуракине Турханти вулав çурчĕ.

К.

# Айлӑмкасра пулса иртнӗ ӗҫсем.

II.

— Итле, Мараҫ, тупрӑм!—куҫӗсене выҭатса илҭӗ Шӑппӑн Михали кӗтӳҫпе Кӑркӑс Михали тухса кайсан.—Ан хӑра матка! Пӗри кунтах вырттӑр, тепӗрне тӗпсакайне антарас. Сӗт ӗҫтерсен уята та пурӑнат̆ вӑл.

— Ху мӗнле шухӑшлан ҫапла ту, ман ӗҫ мар—тесе татса хуҭӗ Мараҫ шӑмарса.

— Иепле сан ӗҫ мар? Есӗ ман матка-и? Ие кӳршӗ ҫынни? Ė ей, тӑмпуҫ!

Михаҭа пӑлтӑртан васкаса кив ашӑк илсе кӗҭӗ те, хушка пуҫлӑ пӑрушне тӗпсакайне илсе анҭӗ.

— Вырт ҫакӑнта, ан шарла. Апатне вӑхӑтра парӑпӑр. Сас-сӑна ан кӑлар—мӑкӑртат̆ Шӑппӑн тӗпсакайӗнҭе.— Кунта ҫӳремелӗх те вырӑн пур. Ну ан тӗрткеле!

Мараҫ ӗне сума тухнӑ. Хура пӑрушӗ ура ҫине тӑрасшӑн та тӑраймаст̆, йӑванса кайат̆.

— Ан васкаха, ан васка, ӳксе амавӑн!

Пӳрне хулӑмӗш ҭӗркенӗ ҭикарккине тивертсе йаҭӗ те, тухрӗ картишне. Иур ҫунӑ хыҫҫӑн ҫавталӑк ӑшӑтсӑ. Ҫуркунне шӑрши те кӗрет.

— Ес ҭей вӗрет, епӗ наҭҭас килӗп—тесе хӑварҭӗ вӑл картара ӗне суса ларакан арӑмне.—Каймалли пур.

— Вӑрах ан тӑр, ҫын патне кайсан путлапан вара! тавӑрса калат̆ ӑна арӑмӗ.

— Ҫук, хӑварт килӗп.

* * *

Кӑркас Павӑлӗ каргишӗнҭе хыҫлӑ ҫуна тӳрлетсе тӑрат̆.

— Ҫуна хатӗрлес-и?—Сӑмах хушса хуҭӗ Михаҭа.

— Ҫапла. Ҫӑварни ҫке. Ну пӗр савӑт ларган пулӗ? йӗкӗлтет ӑна Кӑркӑс—савӑнаҫ вӗт!

— Шугнӗк ес Павӑл—пӗлмен пек пулат̆ Михаҭа,—мӗнле саввӑҫ ҫинҭен калаҫан есӗ? Манӑн та ҫунана тӳрлетмелле те ха, вӑхӑт ҫук—пӑрса йарат̆ вӑл сӑмаха урӑх ҫӗрелле.

— Ес кирлӗ мара ан калаҫ-ха, сӑмахна ан пӑркалантар. Пӑру ҫинҭен калатӑп епӗ.

Ытти ҫӗрте пулсан Шӑппӑн ӑна сӑптӑрса йарӑҭҭӗ те, анҭах хӑй килӗнҭе мар.

— Ну кӑсӑк турӑм епӗ пайан сирӗнпе—тытӑнҭӗ вӑл хытӑ сасӑпа—Шӳт тӑвам-ха, терӗм. Мӗн калӗҫ терӗмӗр арӑмпа.

— Мӗнле шӳт? Мӗн суйлапан есӗ?

— Суйланеа мар, сире икӗ пӑру кӑтарт-рӑм. Пӗри камӑн вӑл? Пӗлӗтни? Мирунӑнне илсе килтӗм епӗ йури, ҫынсем мӗн калӗҫ, тесе. Вӑт мӗнле мӑскара туса илтӗм. Хе-хе-хе!..

Кӑркӑс Шӑппӑн ҫине пӑхса илҭӗ те, кулса йаҭӗ.

— Хе-хе-хе! Ес те ҭӑйе те, епӗ санран та ҭейе. Мана, ват ҫерҫийе, хывӑхпа улталаймӑн. Пӗле-е тпӗр. Хам куҫӑмпа хам куртӑм. Пӑрӑнаймӑ ӑ-н...

Михаҭан хӑй шухӑшне каласа памаллах пулҭӗ. Пӗр савӑт ерехпе килӗшрӗҫ, Кӑркӑс: —Никама та каламӑп, шарламӑп—тесе сӑмах паҭӗ Михаҭана. Ҫул май кӗрсе кӗтӳҫе те ерехпе хӑй йенне ҫаварҭӗ. Иккӗш те «калаҫса ҫӳремӗпӗр» тесе сӑмах паҭӗҫ. Шӑппӑн Михаҭин ӑшӗ вӑркӑшма ҭарӑнҭӗ. Киле таврӑнсан арӑмне те савӑнтарҭӗ.

— Хаҭ ӗнтӗ хӑрамалли ҫук, курнисем те курман пулҭӗҫ. Ыттисене систерме йурамаст̆. Сыхӑ пул!—терӗ вӑл арӑмне.

Ҫӑварнин иккӗмӗш кунӗнҭе вӗсем хӑнасем пухрӗҫ. Ӗҫеҫҫӗ, шавлаҫҫӗ, ташлаҫҫӗ. Вӑл ку сӑмах ҫук. Михаҭа ташласа та кӑтартрӗ. Каҫ пулса килет, хӑнасем ӳсӗрлҭӗҫ.

Ҫул пӑтти ҫиме ларсан, пӗр сас ҭӗвӗ ҫукрах вӑхӑтра тӗпсакайӗнҭе пӑру макӑрни илтӗнсе кайрӗ. Михаҭапа арӑмӗ хӑмаҫ пек хӗрелсе кайрӗҫ, ҫынсем те шӑп пулҭӗҫ.

— Мӗн ку? Мӗн сасси вӑл тӗпсакайӗнҭе? куҫне ҭаркаласа хускатса йаҭӗ хӑравҫӑ Ваҫҫӑ—Михаҭа арӑмин ашшӗ. Хыпнӑ пӑттине ни ҫӑтаймаст̆, ни калла кӑлараймаст̆.

Шӑппӑн Михалипе арӑмӗ тепле ӳкӗтлесен те, нимӗн те тухмарӗ,—тӗпсакайӗнҭи сасӑ тепӗр хут хытӑрах илтӗнсенех, пурте кашӑкӗсене параха пӑраха тухса тарса пӗтрӗҫ. Ҫапла вара Шӑппӑн Михали тӗпсакайӗнҭе хӳреллӗ шуйттан пурри пӗтӗм йала сарӑлҭӗ. Кайран Ҭӗмере Ваҫҫи, хӑранипе пилӗк кун ҭирлӗ выртнӑ тет. Шӑппӑн Михали ӗҫкӗ ваҭҭи тунӑ сӑрине, хӑй пӗҭҭен ӗҫсе, варвиттине кайнӑ, тет. С—в.

(Ҫитес номӗрта вула)

Мӗн ку?




Мӗн ку?

# Майпен „Ҫăвашланатпăрха“.

Ҫăвашкис тени, ҫăвашла: «ҫăвашла кĕнекесем кăларатпăр»—тени пулаҫ.

— Сирĕн слушăшҫисем пурте ҫăваш пуҫ апла?—тесе ыйтрăмăр пĕринҫен.

— Пĕлтĕр улта вырăс, вуникĕ ҫăвашҫĕ:

— Кăҫал-и?.. Кăҫал—улта вырăс та вунă ҫăваш, терĕ ҫав сынах.

— Иккĕлĕ ăҫта кайнă?

Коренисатси аппараг тĕлĕшпе сократтил штат тунă, терĕ.—Ку вин те марха,—терĕ ҫав сынах,—пирĕн секреттарăн ҫăвашла ҫăвашран та лайăх пĕлмелле. Анҫах, вăл ҫăвашла ни пĕлмест те пĕлмест. Ҫĕрĕк сăмах пĕлсен, аллăма ҫапса хуҫ, вво!.. Ҫăвашла ҫырнă хуҫсем килеҫҫĕ те вара, пирĕн секреттар ҫу вăрлана кушак пек ҫӳрет: «Куҫарса парха! Мĕн ҫăвине ҫырнă унта»—тесе ыйтса ҫӳрет пиртен, ҫăвашсенҫен. Мĕн тăвас тен? Куҫарас пулаҫ, терĕ:

— Апла иккенха сирĕн ĕҫсем.

—Ҫапла пирĕн ĕҫсем. Ҫăвашланатпăрха майпе. Хуллен хуллен,—терĕ ҫав сын,—«Капкăна» кĕрғместĕр пуҫ те-ха кун ҫинҫен?—тесе ыйтрĕ йулашкинҫен.

— Ҫук, ҫук, кĕртмеспĕр, ан сехĕрлен!—терĕмĕр.

— Ҫапла пултăр. Атту хама та сократтил штат туса хурĕҫ, терĕ.

Вулакан йулташсем палламан сын пиҫĕ ҫине: «ма каларăм-ши ку хыпара? «Капкăна» пур пĕрех йараҫҫĕ ĕнтĕ кăна»—тенĕ сăмахсем сăрса илĕҫ. Хăравçă сын. А.

# Кайа йулмаççĕ кусем те.

— Епĕ мĕнтен каҫар?—терĕ Илепер йалсоветĕ (Куславкка р.) ҫумĕнҫи пĕрпĕрне килĕштĕрекен камĕрă пуҫлăхĕ. Пултарайманим вара, терĕ.

Ҫыраҫ: Копия.

**Постановление.**

17 февраля. 1929 года. примирительная при Илебарском сель совете козловского камера расмотр в дело гр-на Сидоров Никандр о Взыскание яблони. повреждениие Яблони 15 ш количестве за одново яблони согласно Акта козами гр-на село Никольской Адамов Сергей и Озорова Евдокия постановили взыскать с гр-на Адамова 1 р 50 коп. и Озорова Евдокия 1 р 50 копеек всего 3 рубля в пользу одно шителя Сидорову а остальной часть отказать

Председатель камера Мозер...

Темиçе хуг вуласа туксан çак литтературă мĕне пĕлтернине ăнланма пулаҫ. Анҫах, ҫăвашла мавнă, вырăсла нихçан та пĕлмен Калейĕва никам та ăнланас çук.

Вăл çыраҫ:

Акт.

1928 года мая 5 дня

Я уполномоченой член Никольского с/с Василий Калеев при присутствие понятых (йаҫĕсене асăн) обследовали яблони Село Никольской Никандр Ситоров которая при обследованиш нашли следующии перекрысной. Яблони 15 штук: Из которых свежий перекрысной 5 май находится один по содержание коза Сергей Адамова и Евдокия Озорова. Перекрысаной яблони 14 ш не исвесно чайи козы переккрызанно. Почему перекрысной яблони отравленой козлем. Адамова и Озорова один стоимости 3 рубля а остальные 14 тоже по 3 рубля кождый корен.

Çăмах йашкине йурма йурса çинĕ хыççăн кăна та ăнланма пулаҫ: Çитăрăвăн 15 улма йăвăççине Атамăвпа Осорăвă каҫакисем кышласа хăртнă. Калейĕв акт çырнă. Теприсем—сут тунă. Анҫах, кама: «Ковел» темелле кунта? Калейĕва-и Моçĕрăва-и?

# Çăварнийе кам мĕнле иртернĕ.

Йехрим Иванĕ.

Ҫĕклĕм Паҫҫи çăварни
Пит аван иртерҫĕ,—
Кӳпсе йанă пĕҫҫенех
Виç ҫĕрес икерҫĕ.
Пирĕн кӳршĕ Иакку та
Аванах иртернĕ—
Пилĕк çынна ӳсĕрпе
Иунпа пĕвĕнтернĕ.
Ават касри Михаҫа,
(Темĕн йурамарĕ)
Кулет тунă хыççăвах
Леш тĕнҫене карĕ.

Коопераци пуçлăхĕ
Тушă çывăрмарĕ—
Арăмĕпе çапăçса
Пĕр шăл хăвармарĕ.
Катаҫире Çĕпритун
Утне хыпăнтарнă—
Тепĕр кунне çавăнпа
Кайнă та пытарнă...
Ав ăçта вăл мыскара—
Çăварнишĕн савăнаç.
Хăçанши çак «вăйăсем»
Пăҫ куçран çухалĕç?..

# Ăна алăкран, вăл--ђўређерен.

„Йурăхсăр çынсене уђрештени алăкĕнђен шăлса кăларатпăр та, вĕсем „ђўређерен“ кĕрсе ларасçĕ“. (Советсен 3-мĕш сйесĕнђе Фокин йулташ каланинђен).



„...Малашне çапла тумалла. Уђрештевирен тасатса кăларнă йурăхсăр çынна тепĕр хут нимле уђрештенине те йышăнмалла мар,—питĕрьелле ун çулне“...

(Фомин й-ш сăмахĕньђенех)



„Капкăн“ çапла шухăшлаť: уђрештенирен тасатса каларнă çынсем „ђўређерен“ ан кĕђђĕр тесен, вĕсем кĕрекен ђўређесене çапсах хумалла; „ђуређине“ уçса хуракансене те алăкранах шăлса кăлармалла.

# Ех, ӑпкӑҫке Ӳутайра.

Хӗрлӗҫутай Райӗҫтӑвкомӗн ҫутӗҫ инспекторӗ Митакков ҫамрӑклӑхра пӗр хӗре йуратнӑ та—авланнӑ. Арӑмӗ, ҫӑн та, йапӑхскер ленкмен. Паллах, ҫуллен пӗрер октапрӗнӑк хутшӑнса пынӑ Митакковӑн...

Хыҫӑ хӗпӗртеҫҫӗ Митакков малтанхи аҫисем ҫуралсан... Калама та ҫук. Анҫах, тӑваттӑн (савнӑ сарӑ арӑмӗпе пиллӗкӗн) кӗрӗк аркинҫен ҫакӑнса:

— Атте канхвет илсе парха!.. Фейӑпа Найӑна кӗрӗк кирлӗ, тесе ҫухӑрма пуҫласан, Митакковӑн хура куҫӗсем ҫап-ҫутӑ ҫутӑлса карӗҫ.

— Иоште корӗн,—терӗ хӑйне-хӑй Митакков,—капла май килмест... Тавай, арӑма ваҫҫи вырӑн шырас... Ӗлӗк-авал вӑл уҫитӗлнитсӑ пулнӑ вӗт, кайса ҫикес пӗр-пӗр шкула! Арӑмпа иккӗн 120-130 тенкӗ илме пуҫласан, ҫисти непмӑнски пурӑнма пуҫлатпӑриҫ?

Арӑмне уҫиттӗлнитсӑна кӗртмелли проектӑ тупӑнсан, Митакков ҫамрӑклансах карӗ...

Анҫах... Саквосӑ! Ара... Вырӑн ӑҫтан тупас? Шкулсенҫе шагах, районӗпех уҫителӗсем пур.

Митакковӑн ҫамки ҫине сив тар тухса карӗ. Вырӑн, выр-р рӑн ӑҫтан тупас матка ваҫҫи, е? Виҫӗ кун та виҫӗ каҫ мекӗрленҫӗ Митакков ҫак сатаҫҫӑн туппине шыраса. Паллах, Митаккова никам та ухмах теме пултараймаст, паллах, вӑл ӑслӑ. Аслӑ пиркийех, вӑл ҫасах „выххӑт“ тупнӑ...

Ҫанах тупнӑ. Акӑ мӗнле.

Туктамӑш йалне кайса, темиҫе шкул аҫине пӗрер кӑранташ, темиҫешер листа хут тытарат те, хӑй тиктовккипе Парккӗн уҫитлӗ ҫинҫен... сайавлени ҫыртарат: ҫапла-ҫапла, йапӑх, аҫасене хӗнет, шкулта лайӑх вӗрентмест, путсӗр пурӑнат, т. ыт. те. т. ыт. те...

Сайавлени «на йат!» пулса тӑҫӗ.

Пӗрик кунтанах сайавлени РӖК‘е... Митакков аллине ленкет.

Митакков хӑйӗнпе пӗрле пӗр милитсионера лартат те, «тӗрӗслеме» вӗҫтерет. Паллах, Парккӗна ҫисти наҫалнӗкле кӑшкӑрса тӑкат, вҫаткӑ панӑ аҫасем топросра Митакков вӗрентнӗ пек каласҫӗ те, Митакков пӗтӗм ҫӗре ҫӗтревтермелли актӑ ҫырса, Хӗрлӗҫутайа вӗҫтерет, калла...

Ӗҫ пулса ҫитрӗ! Митакковӑн хӗпӗртенипе урисем ҫӗре те перӗнмесҫӗ... Ей, тӗнҫе илемсӗрех те мар, матка ваҫҫи вырӑн тупса пултӑр!.. Парккӗна шкултан к ҫорту! хаҫ...

* * *

Анҫах... (Ах, каллах анҫах!..) ҫав вӑхӑтра шкул тӗлӗне парттийтсӑ Тимитрийӗв иртсе пырат мӗн те... Шкулта аҫасем шавланипе шала кӗнӗ... Вара (ах, хӑйамат, ҫӗр ҫӑташшӗ!) аҫасем Тимитрийӗва ӗҫ мӗнле пулнине тӗпӗ-йӗрӗпех каласа кӑтартнӑ...

Тимитрийӗв—ҫасрах Хӗрлӗҫутайа... Митакковӑн „маххинатсийӗ“ пӗтӗмпех тӑрӑ шыв ҫине тухат...

Митакков хуйхӑрнӑ-хуйкӑрнӑ та—ӗҫ пӗтрӗ! Аван вӗт? Леон. Линҫ.

# Тӳнтерле ҫыхӑну.

Ҫӗрӗҫ Халӑх кӑмиссариатӗнҫе ӗҫлекенсем «Хресҫен ҫуртӗнҫе» пӗрре веҫҫӗр тума шутланӑ. Хуларн мешҫенсене, илемлӗ, аҫаш майрасене выхрав пилеҫӗсемпе ҫӗнсе пуҫтарнӑ.

Кӗрлет «Хресҫен ҫурҫӗ». Ҫамрӑк мишавайсем ҫутӑ тӳммеллӗ пиншаксене йӳле йанӑ.

Нуман ҫулҫиллӗ ҫут тӳммесем електритсӑ ҫутипе йалтӑртатасҫӗ. Аслӑ уйаври пекех капӑр, таса тумланнӑ майрасем те туллийех.

— Мӗнле уйав?—тесе тӗлӗнесҫӗ айалти хутра пурӑнакан патраксем.

— Пайан кунта ҫпектаккӑҫ, веҫҫӗр пулмалла. Айӑр, епӗр те хӑпарса курар, терӗ пӗри.

Курсра вӗренекен патраксем ҫӗтӗк пиншаксене уртса йарса, лаптак пуҫлӑ ҫӑпатисемпе лаплаттарса хӑпарҫӗҫ ҫӳлти хута.

Ҫанах ҫпектаккӑҫ. С а л ӑ р а туллийех халӑх.

— Айӑр курар, хуларн ҫпек...

— Ваш пилет!—терӗ алӑкра сыхлаҫа тӑраканӗ.

— Пирӗн нимӗнле пилет те ҫук. Епӗр—йалтан килнӗ патраксем, кунтах курсра вӗренетпӗр. Ахалех йурат пулӗ... терӗҫ курасшӑнскерсем.

Ӗҫ тухмарӗ. Кӗртмерӗ пӗрне те. Ирӗксӗрех пӗр сехетрен веҫҫӗр пуҫлӑхне тупса йӑланмалла пулҫӗ.

— Епӗр патраксен курс...

— Пӗлетӗп, пӗлетӗп, йулташсем. Пирӗн веҫҫӗр хуларисемшӗн ҫеҫ. Сире ваҫҫи пилет пулман, терӗ веҫҫӗр пуҫлӑхӗ тени.

Вара курсра вӗренме, хула куҫттурӗпе паллашма килнӗ патраксем пусма карлашки ҫинҫе тӑрса ывӑнсан, айалти пӳлӗме анса ҫывӑрҫӗҫ.

Ҫӗрӗҫ ҫпетсем куҫттурӑ касӗнҫе прӗккӗн савӑнса ир йенелле тин саланҫӗҫ. Ҫапла вара йал куҫттурлӑхне хӑпартас тӗлӗшпе ҫав тери пысӑк ӗҫ туса хуҫӗҫ.

У т.

## Совпрофшвилккисем.

Ђăвашпрофсоветĕнђе те тăмпăшал перевевсем тупăвђĕç, ађасем.

Увти Осоавиахим йађейкки лару хыççăн ларма ларса: „епĕр те ĕçлетпĕр"—темешкĕн Авиайăлттари пилеђĕсене 50 штук илсе килет. Вĕсене ђленсем хушшинђе салатас вырăнне шăп ик уйăх çурă арђара тытса усрат те, кайран, ăçтан илнĕ çавăнта шăп 50 пилет леçсе парат.

Пĕр пилетне те çухатман иккен. Профсовет тĕлне Ђĕмпĕрлев йероплане вĕçсе килсе тăм вомпа пăрахсан, тÿрех тăмпăшалран кĕрлеттерме тытăнаççĕ ĕнтĕ профтăмпăшалĕсем.

— Тр-ре-вокă-ă! тесе кăшкăрсан, тăмтупăран кĕсеппе пеме пикенеççĕ ĕнтĕ вĕсем.

### 1 № совухмах.

Шупашкарти шкулсем канмалли куна вырсарникунтан тунтикуна куçарас тĕлĕшпе пуху тунă. Пĕр пухура Статуправленинђе пысăк вырăнтах ĕçлекен Рукавишнĕккăв çапла каланă:

— Мана ађасен сывлăхне сыхлас ыйту ытларах шухăшлаттарат. Канмалли куна тунтикуна куçарсан, епĕ хам ађасене Атăл леш йенне илсе кайаймастăп Мĕншĕн тесен, тунтикун епĕ санатăйне кайатăп, тенĕ.

Анђах, ку етем шкулсенђе хура кĕркунне (леш йенне каçма пăрахсан) вĕрентме пуçлавипе Атăл леш йенне çÿреме пуçлиђђен—çуркунне пăрахтарнипе аса та илмен тăмпăшал.

Етем те есĕ вара ăна. Ађасене хĕлхута Атăл леш йенне çавăтса кайса кућат тутарасшăн, е!

### 2 № совухмах.

Катек йалĕ (Патăрйел р.) кашни çул икĕ кĕпер туса виçĕ кĕпер пăсат. 10 çулта икĕ кĕперне сахалтан 30 хут ишсе тинкеленнĕ. Сулăм укçи пуçтарасђĕ те, икĕ кĕпер вырăнне пĕр кĕперне лайăхрах туса хурсан калама çук лайăх пулмалла. Аслă çул çинђи кĕперне райĕçтăвкомăн тугармалла, тет Хĕрађа.

Тăмпăшалсем çав, тăмпăшалсе-ем! Çăмăр çăват те кĕпер ишĕлет, çăмăр çăват те кĕпер ишĕлет. Кĕпер тÿрлетнĕ хыççăн хытă йурлаççĕ пуђ вара, шăпа тăрри çĕрсене самокон.ла улăштарса.

Настойашђи тăмпăшалсем ĕнтĕ.

## „Капкăн" пур, сÿре те пур.

„Канаш" хаçатăн пысăк выђавĕнђе Уравăш йалĕнђе пурăнакан (Вăрнар р.) Л. П. Орлова тимĕр сÿре тухрĕ. Вăл кĕр çултаăккăха „Капкăн" илсе тăма сырăннă.

Пĕр тенкĕ укçа мĕн туса хуђĕ ĕнтĕ: çулталăкĕпех Орлова, увăн çемйине, кÿрши-аршине култарат, выђавра тухнă сÿрепе 10—12 çул сÿрет ĕнтĕ Орлов.

„Капкăн" сыранса илме тăрăшăр!




### 3 № совухмах.

Иакkасси (Патăрйел р.) уђитлĕ Каврил Микихверђă пĕр пуйантарах сынвăн шкула çÿрекен ађин шăлĕсене çапса хуçса, пиђĕкуçĕсене шыçăнтарса йанине: «вăл епĕ кулаксемпе тимлĕ кĕрешнине пĕлтерет»—тесе çÿрет Х—ђа.

Вĕр çĕнĕ тăмран тунă тăмпăшал ку. А еçли хăйĕн çăварĕнђе пĕр шăл хăвариђђен сăптăрса тухакан сынна тем йатне паратђĕ вара? Ех, тăмпăшал, тăмпăшал!

### Тахăшĕ ĕнтĕ кунта профухмах?

Шупашкарти уђитлĕсен 6-мĕш №-лă месномĕн пуçлăхне пĕр пухура çапла ыйту панă:

— Кашни уђитлĕ пуçне вĕренекен ађасен шуђĕ нормăран ытлашши тивет. Ĕç йавăр. Вĕсене çăмăллатас тĕлĕшпе месном мĕн калама пултарат?—тенĕ.

Месном пуçлăхĕ çапла каланă:

— Уђитлĕсен ĕçве сăнаса тухнă комисçин актĕ Ђăвашпросра çухалнă та, ним те калама пултараймастăп, тенĕ.

Тăмпăшал кам иккенне палăртма хĕн кунта: те месном, те Ђăвашпрос. Анђах, çав акта Ђăвашпросăн кив йĕм кăсйинђе шыраса пăхăр-ха! Çавăнта выртмаст-и вăл, мур?

### Пĕђĕккĕн ђĕпĕтетпĕр.

**Кивĕ претçетаттĕл—растратђĕк.** Ђăваш Сурăм (Елĕк р.) йалсоветĕн претçетаттĕлĕ Иевтоккимăв Сакар Уçăпĕнђен налок укçине 4 тенкĕ те 94 пус илсе, тата Никколайĕвă Çтеппанитăна 5 тенкĕ те 21 пус кайалла тавăрса памалла укçана хăй кĕсйине ђикнĕ. И. К.

Çĕнни шарламаст. — Кивви йала сутса йанă пулсан та, ман ĕç мар, тет ĕнтĕ вăл.

**Илес пулсан, парас пулат.** Тивĕшри (Елĕк р.) кивçенлĕх йулташлăхĕнђен укçа кивçен ыйтас пулсан, ĕçкĕсĕр ырса та ан ыйт, тет К—йĕв.

Ку йапала ђăнахах пулсан, йулташлăх правленин ђленĕсене ĕçтерсе лариђђен вĕçтерсех кăларас пулат.

**Ођко ăнат,** тетĕя есĕ Ваççилйĕв йулташ. Есĕ Нĕрĕш (Çĕрпÿ р.) йалĕн ĕçтăвакан комиттетĕнђе ĕçлеместĕн и-ха? Çырăву çине йалĕçтăвком штампне пусса йанăран калатнăр-çке. Ма тата „ђухăнсене çаратса пурăнакан Ласăрсене" ђармастăв?



## Мĕн тунине пĕлме ҫук.

Алкаҫăнра (Вăрн. р.) ҫамрăксем пĕр ҫурта пухăнаҫҫĕ те, ҫĕрĕпе краҫҫин ҫунтарса лараҫҫĕ. „Мĕн ĕҫлеҫҫĕ иккен унта вĕсем? Ĕ? Иал ҫыннисем те тĕлĕнеҫҫĕ“. Хут вĕренеҫҫĕ пулĕ? Ие пуҫтарăнса нĕнеке вуланине итлесе лараҫҫĕ-и тен?. Анђах... хут та вĕренмеҫҫĕ унта, кĕнеке-хаҫат та вуламаҫҫĕ. Алкаҫăнти ҫамрăксен вăхăт ҫук, картла выљасси йулаҫ. Ҫĕр каҫиђђен хăшĕ пĕри 20-30 кăрупккă шăрпăк выљаса йараҫҫĕ. Ҫара сĕрҫисем пек „ҫĕрле ђĕрĕлеҫҫĕ“ кăнтăрла ҫывăраҫҫĕ“.

Вăн йеплеǃ Вăратма вăхăт ҫитмен-ши вĕсене?

## „Хăватлă“ иккун.

Ĕлĕк иккунсем хăват тукаланă тени тĕрĕс те-и-тен? Ђорт пĕлети, — тунă та пуљ ҫав. Хаљ илтĕнмест-те, хăш пĕр ҫĕрте, хăш ђух пулкалаҫ. Акă Тури Ҫĕрпӳкассине (Хĕрлĕђутай р.) илер. Унга йалхурал пӳртне пĕр иккун кĕрселарнă. Тем каласан та хăватлă иккун пуљ. Иалсоветне курăнмасăр «вăрттăн» вырăнаҫнă пулсан ҫеҫ? Вăт есĕр хăват ҫук тетĕр. Вăл кăва пулсан пырĕђђĕ те, хăратма та пултарнă „культтурлă“ ҫынсене.

«Хурал пӳртĕнђе тĕрлĕ токлатсем тăваҫҫĕ, пухусем туса иртереҫҫĕ, анђах иккун пит хăрушă пăхса ларнипе ăна илсе пăрахма никам та хăйаймасҫ. Хĕрлĕђутай райĕҫтăвкомăн атăмпаĕ пуҫлăхĕ те иккуна кăларса пăрахасси ҫинђен калама хăрарĕ пулас, йалти уђитлĕ—Уҫтинăв та (йалсовет ђленĕ) «Ма есĕр халăх пӳртĕнђе иккун тытатăр» тесен, ним калама та хăраҫ», тесе ҫыраҫҫĕ пире.

### Капкăна вунă пине ҫитерес тесен мĕн тумалла?

Кăшни „Капкăн“ илсе тăракан пĕр ђын хăйне йулташлăха тепĕр ҫын тупса, ăна пĕр ҫуллăха „Капкăн“ илме ҫырăнтарсан, вара „Капкăн“ шăп вунă пин ҫапăнса тухаҫ.

Вулакаппа кулакан, тупса ҫырăнтар хăвăн пĕлĕшне.

„Капкăн“ хакĕ: ҫулталӑка—1 тенкĕ, 6 уйăха—55 пус, 3 уйăха—30 пус.

Атрĕсне ан манăр: г. Чебоксары, Конторе газеты „Канаш“.

## Настайашђи совухмах.

Уйпуҫ йалĕнђе (Хĕрлĕђутай р.) страхховккă укҫине пуҫтарма пăрахрĕҫ. Иалĕҫтăвком претҫетаттĕлĕ кăмака ҫинђен те анмасҫ.—Страхховккă укҫине пуҫтарасси мап ĕҫ мар. Манăн—пиђет пусасси те, ал пусасси, тет.

К—п.



Ҫапла хăтланаҫ пуљ ĕнтĕ Уйпуҫĕн пуҫсăр претҫетаттĕлĕ: выртаҫ вăл кăмака ҫинђе те, вăрăм ăварлă пиђете выљантараҫ ҫеҫ.

## Пĕтпĕлтĕк.

— Сана пухăва ђĕнеҫҫĕ, претҫетаттĕл йулташ.

— Ђорт сирĕнпеǃ Ларђђăрха пăртах... Камсем пуҫтарăннă унта?

— Арҫынсем, хĕрарăмсем, пур те. Михаља йӑкор та пур...

— Нуǃ.. Михаља та пынн? Айта апла пулсан... Кĕтгерес мар ҫынсене. И—р.

# Пирӗн анкеттӑ.

«Анкеттӑ» сӑмаха илтсенех пирӗн вулакансем «йӑ-ӑ-х» кулса йарӗҫ.

— Аха-а, „Капкӑн" та пӳрократланма пуҫланӑ, анкеттӑсемпе аппаланат̆, тейӗҫ хӑшӗ-пӗри.

Ҫавна сиссе епӗр, вулакансенђен малтанах каҫару ыйтатпӑр. Тӑвата ҫул хушшинђе («Капкӑн» тухма пуҫлани тӑвата ҫул тулђӗ) пӗртен-пӗр анкеттӑ ҫырнӑшӑн питех пысӑк «ҫылӑх» пулмӗ тетпӗр. Мӗн тӑвас тетӗн, „Сӑмсаран ҫӳлӗ сикеймӗн", теҫҫӗ ваттисем. Иртнӗ ҫулсенђе епӗр, «Капкӑн» ђӗппи-сене интервӳ текен йапала илме салатаканђӗ те, кӑҫал вӗсем «питпеле йалалла» тесе районсене саланђӗҫ.

Ҫавӑнпа йупилей ҫитиђен икӗ уйӑх маларах епӗр йури анкеттӑ ҫырса салатрӑмӑр. Анкеттӑ тем пек пысӑк мар ӗнтӗ, мӗн пурӗ те виҫӗ ыйту анђах. 1) «Капкӑн» кӑмала кайат̆-и? 2) Кашни нумӗре вулатни? 3) Малашне «Капкӑна» мӗн сунатӑн. Икӗ уйӑх кайалла йанӑ пулсан та, хӑш-пӗр ответне шурнал ыран тухас тенӗ ђух кӑна илтӗмӗр, пӳрократтисӑм пӗтмен-ха. Хуликанпа пӳрократ ђи кайран йаҫӗҫ. Ҫавсен ответӗнђемех пуҫлӑпӑр.

Хуликан. 1) Пысӑк хӗрес хунӑ (хут пӗлмест, снађђӑт). 2) Унтан йӗпетнӗ (сӗлеки йухнӑ пулмалла). 3) Хут пӗлмесен те намӑс сӑмах ҫырма пӗлнӗ.

Пӳрократ. 1) Анкеттӑ ҫырма пӗлместӗр, кулӑшлӑ анкеттӑ. Виҫҫӗр ыйту пулсан пырӗђђӗ те, виҫ ыйту мӗн вӑл? Тӳррипех калатӑп—йуратмастӑп, вуламастӑп, ырӑ сунмастӑп. Айалта: «К делу подшить».

Вҫаттӑђнӗк. 1) Вҫаткка парӑр—калӑп. Типӗкашӑк ҫӑвара ҫурат̆, ҫавна астӑвас пулат̆.

Совухмак. 1) Тирпейлӗх решимӗ „ђухне ун пек шурнал кӑларса «сийен» тунине ырламастӑп, сталӑ-пыт̆—шурнала та вуламастӑп. Ђӗрене ҫийет. Епӗ мӗн суннине хӑварах пӗлетӗр пулӗ.

Потхалим. 1) «Капкӑна» та йураса пулми тесе икшер хут вулатӑп, анђах ман шутпа «вӑйлисене» хирӗҫ пыни, ырӑ йапала мар, ђарӑнма ыйтатӑп. Тем курса тӑрӑр. Хӑвӑра хӗрхенсе калатӑп. Май шӑлвинђен ырри ҫук. «Капкӑн» хуҫине ман пек пулма сунатӑп.

Ђӑвашла калаҫма маннӑ ђӑваш: 1) Чувашски белмест.

Растратђӗк. 1) «Капкӑна» йуратма укҫа мар вӗт вӑл. Укҫаллӑ уђрештени пулсан кӑмӑллӑттӑм. 2) Ђервонтсӑран пуҫне урӑх нимӗн те вуламастӑп. 3) Нимӗн те сунмастӑп, мӗншӗн тесен унтан... хӑрамастӑп. Сутран ҫеҫ шикленетӗп.

Кулак. 1) «Капкӑн» хуҫине персе вӗлерме пӑшал хатӗрлерӗм, тӑвата ҫул сыхлатӑп, тупма ҫук. Мана пурнӑҫ паманшӑн, ҫӗр ҫӑттӑр. Ҫавна сунатӑп.

Пуп. Каплипе кӑмӑла каймаст̆, тӗн ҫинђен ҫырма пӑрахмалла. Хӑш-пӗр нумӗрне вулакалатӑп. «Капкӑн» хуҫине тамӑк тӗпне кайма сунатӑп. Аминь.

Формалис. Шурнал пулат̆я вӑл? Ни исхот̆ашђи, ни вхот̆ашђи ҫук. Формӑсӑр ҫырнӑ. Ђиркуђар тӑрӑх ҫырас пулат̆.

Кунтан пуҫне тата темђул ответ килђӗ, шутласа та кӑларас ҫук. Кӑсем вара урӑхла шутлаҫҫӗ. Мӗнле кӑна ответ ҫук-ши. Мӗн кӑна ҫырмаҫҫӗ-ши? Патт̆ушки мои! Пӗри ҫырат̆ (йалти активис): „Капкӑн" тухасса куҫ пек кӗтсе тӑратӑп, илсен вуласа ђарӑнаймастӑп. Кулса ӑш ыратат̆. Пӗр нумӗра та вуламасӑр йулман. Малашне тата вӑйланма, ҫивӗђленме сунатӑп тет. Тепри тата: (комсомолӗс). „Пирӗн йалта" хуликансем пит аснӑђђӗ. „Капкӑн" тухма пуҫланнӑранпа вӗсем пӗтӗмпех пӗтрӗҫ. Салам „Капкӑна" пирӗн ӗҫе пулӑшнӑшӑн, тесе савӑнат̆. Виҫҫӗмӗшӗ тата (хӗрарӑм). Ман упӑшкана „Капкӑн" ҫын турӗ, вӑл ерех ӗҫме, ҫапӑҫма пӑрахтарђӗ. Спаҫҫипӑ ӑна. Иупилей кувӗ ӑна парне парас тетӗп. (Пӗр тӗрӗленӗ сурпан йанӑ). Пӗр старик ҫырат̆: Ӗлӗк пирӗн йалта Мекӗте Ваҫли пурӑнађђӗ, вӑл ҫеҫ култарма пултарађђӗ, вӑл вилсен култарма пӗлекен йулмарӗ. „Капкӑн" унтан ҫӗр хут ытла ӑстарах култарат̆. Хуйха-суйха сирсе йарат̆, „Капкӑна" вуланипе 78 ҫулта пулсан та, шыв сторох, тохо и вам шалайу, repettӑ"! тесе ҫырат̆. (Ӗлӗк салтакра пулнипе вырӑсла калаҫма пӗлет).

„Капкӑн" шурнал тухнине тӑван халӑхра нумайӗшӗ пӗлмеҫҫӗ курӑнат̆—тесе ҫырат̆ тепри (вуламалли ҫурт пуҫлӑхӗ). Иепле те пулсан пӗтӗм халӑха ҫырса пӗлтерме май ҫук и? Мӗншӗн тесен, епӗ кӳршӗ йала пӗрре ҫеҫ кайса вуласа патӑм та 29 потписђӗк (вӑтӑра пӗрре ҫеҫ тулаймарӗ) тупса килтӗм. Ун пек интереслӑ шурнала ҫырӑнса илмесӗр пултараймастӑп. Ҫав тери аван, ҫав тери илемлӗ, (ку тӗлӗшрен Филиппӑв Й. тӑрӑшат̆). Ҫав тери интереслӑ, ҫав тери йӳнӗ (ҫулталӑкне те пӗр тенкӗ ҫеҫ вӗт). Хам пулсан кашни ҫынна уйрӑм ҫыру йарса пӗлтерӗттӗм, йе ратиопа каласа систерӗттӗм, ма есӗр кирлӗ таран хыпар памастӑр пурне те? Респуплӗк тулашӗнђи ђӑвашсем пит нумайӗшӗ вӑл тухнине пӗлмеҫҫӗ. Вӗсем те пӗлсе ҫитсен сирӗн шурнал такҫанах 20 000 ҫитмелле" тесе ҫырат̆. Тен, тӗрӗс те ку сӑмахсем. Шухӑшласа пӑхӑр ха вулакансем?

„Капкӑн" хуҫи хушнипе майласа ҫырнӑ: Сӗлтӗрмен PS, Ытти ответсене кӑтартса тӑмастпӑр, вунӑ нумӗрте те ҫырса пӗтерес ҫук.

# Тасатнисемпе тасатмаллисем.



Кармӑшри Иуссупӑв Й. партти ђленӗ. Вулӑҫтӑвкомра, копператтивра, йалканашӗнђе, пулӑшкомра ӗҫленӗ. Пур ҫӗрте те растраттӑ тунӑ. Пуйансемпе ҫыхӑну тытнӑ. Хађ парттирен кӑларса ыватнӑ.

**А. Х.**

Нумай ҫирӗн ҫав шалуна..
Хађ ӗнтӗ йӗрсе лар шӑлна.
Пирӗншӗн ес йут,—кирлӗ мар,
Хӑт ҫарапакартӑн лар!



Кив Вӑрмартра (Вӑрмар р.) Васҫили Ҫтеппанӑв —партти кӑнтидађӗ йалта хуликанланса, ӳсӗрӗлсе, хӗрарӑмсемђен мӑшкӑласа ҫӳрет. Тийеп.

Ай та-а-а, хулика-а-ан!
Ху партти реҫӗнђе тӑран.
Ҫу-ук, ҫу-у-ук, кирлӗ мар пире сан некки.
«Хӗрарӑмсен ҫумҫекки»!

Атнар йалӗнђи (Х. Ђутай р.) Петӗр Орлов партти ђленӗ арӑм кӗтӗвӗ кӑларвӑ. Туйсенђе ӗҫсе, ҫӑвар карса ҫӳренӗ.

Халӗ ӑна парттирен кӑларнӑ.

**Сава.**



Карарах пар ҫӑварна!..
Лайӑх пултӑр кӗме шӑнана.
Ҫӑвар карма есӗ ӑстаҫӑ—маҫтӑр
Арӑмусен аслӑ кӗтӳҫӗ—«пастӑр»

Ђиркӳллӗ Елменти (Вӑрмар р.) Тимухха Хӗлипӗ (партти ђленӗ) пуйансемпе кӗрешетӗп тесе вӗсен кантӑккисене ҫапаҫапа ҫӗмӗрнӗ, хӑйс не пӳрђӗсене кӗре-кӗре хӗнесе ҫӳренӗ.



**С—а.**

Вӑкӑр пуҫлӑҫке есӗ...
Ҫавӑнпа ҫӗмӗрсе ҫӳретӗн.
Апла май килмӗ, ађам,
Хуплас пуђ сан ҫине аҫам!

**Ҫ. Шӑпђӑк.**



Туктамӑш (Х. Ђутай р.) йалӗнђи П. В. Романӑв партти ђленӗ йалти ӗҫсене тумав. Копператтива ҫаратнӑ ҫӗрте ӗҫленӗ. Хађ ӑна парттирен кӑларнӑ.

**Хум.**

Ех ти, кахал, нимӗн ӗҫлемев!..
Копператтив ҫаратма ӳркенмев!
Пӑхатӑп—шулӗк сӑвлӑ,
Ҫавӑнпа сана парттирен шӑлвӑ!

## Аплах мар пулђте... сӑвви ҫапла ӗнтӗ.

— Комсомол ретне тасатас ӗҫ мӗлле ырӑй сирӗн?

— Пит те аван.

— Пуп ађисене сирпӗтрӗри?

— Мӗншӗн? Вӗсене сирпӗтсен, йађейккӑ та хупӑнаӑ вара. **«Ҫинус».**

## Ђиркӳ хуралҫипе пуп кукхаркки.

— Есӗ, Марйе Лӑриванӑвӑ, ҫӗнӗ хыпар илтвӗ-и?

— Мӗн хыпар тата? Ие вӑрҫӑ тавранаӑ-и?

— Вӑрҫи ҫӑва тӗпне пултӑрха вӑл, вӑрҫӑ мана усӑ тӑвас ҫук. Парттийе кӗретӗп, вӑт ҫак ҫӗнӗ хыпар пулаӑ. Халӗ парттийе патраксене нумай кӗртмелле, тет. Иађейккӑ ҫеклеттарӗ Елексантӑр Иекорђӑ мана ђӗнет. Килес ҫул йалканашӗн претҫетаттӗлӗ тӑвӑпӑр, тет. Вӑт пурӑнатӑп вара икӗ шалупа. Ун ђухне ђан ҫапмастӑп вара хам, йалисполниттӗлӗсем шаккађӑр ђана. Ех, ӗҫки вара ун ђухне!!! н-н-н-н-а толькка!!!

— Ку ђӑпах та ырӑ хыпарҫке. Епӗ те тахҫанах патрађккӑ шутӗнђе тӑратӑп, апла пулсан мана та ђӗнеҫҫӗ пулмалла. Ну, вара пађӑшкӑна опишаӑ тума памӑп. Атту ӑна ку ђухне тырӑ пуҫтарма ирӗк пами пулђӗҫ. Пирӗн пађӑшкӑ пек ыррине ниҫтан та тупаймӑн: апат аван, ђей ӗҫтерет, тата матӑшкӑ курман ђух йурату ҫинђен те пуплет.

Ех, ырахҫке пађӑшкки!!!

**Ҫыртакан пӑрҫа.**

# Ĕçлеççĕ те иккен.

Платкă йалĕ (Шупашкар р.) йалĕпех виçĕ çын аллине кĕрсе ÿкнĕ.

Виççĕшĕнчен пĕри—вăл, Скворцов. Никам хушмасăр, никамран ыйтмасăр хулхушшине папкă хĕстерет те, йал тăрăх „хырăçмарăç“ пуçтарса çÿрет. Çĕр йĕркеленĕ чух çемлемера 3 уйăх хăй патĕнче хваттер йарса тăнăшăн йал укçине 60 тенкĕ хырса йулчĕ. Çемлемера укçасăрах хваттере йышăнакансем пурччĕ. Халăх вăрманне сутса, укçине хăй кĕсйине чиксе хучĕ. Кивçенлĕх йулташлăхĕнчен 30 тенкĕ илчĕ те, Çĕрпÿ йармăккинче хресченсене картпа улталама карĕ.

Иккĕмĕш—Саппошнĕккăв. Претçетаттĕл пулнă вăхăтра Маштавăш йалĕнчи хресченсем пуçтарнă сулăм укçине персе чикнĕ. Икĕ тăлăх арăмăн носсопа укçине (75 тенкĕ) халь те паман. Кунĕн çĕрĕн ĕçсе çÿрет. Иала та, йалсоветне те хăратса тăрат. Ним те тăваймаççĕ ăна.

Виççĕмĕшĕ—Мичуттăв. Ку вара пит палăрнă растратчăк. Парттирен те çавăншăнах кăларнă ăна.

Пухура çак çынсем мĕн тăвас тенĕ, çавна тăваççĕ. Вăрлăх фончне тăвасшăн хресченсем нумай кăшкăрчĕç. Апчах, виçĕ карма çавăр ирĕкĕнчен нимĕпле те тухаймарĕç,—фонт пулмарĕ.

Йалсоветĕнчен:—сирĕн йал çинчи ĕçсем мĕнле пыраççĕ-ха, тесе ыйтсан:

— Епĕр пит пĕлсех те каймастпăр... Мичуттăвпа Саппошнĕккăвран, йе Скворцовран ыйтас пулат кун çинчен,—теççĕ йал пуçлăхĕсем.

Апла иккен ĕнтĕ: йалсоветчĕ те виçĕ куштан çăмахĕнчен тухаймаст, тесе çырса пĕлтерет пирĕ пĕр йулташ.

Çак çăмахсем çинченех нире çырса пĕлтерекен кореспотент çав куштансен ĕçĕсем çинчен Шупашкар райĕçтăвкомне йанварĕн 15-мĕшĕнчех çырса панă. Шупашкар РĔК-ĕ ку хутăн 2-мĕш страницĕн çине хĕрлĕ чернилпа: «Поручить расследовать уполном. Синицыну»—тесе хĕреслĕ ресолютси хунă та, хутне пĕр йешчĕке чиксе хунă.

Мĕншĕн Çинитсына памалла? Çинитсын хăй ĕçне тунă. Вăл çырса панă. Тата мĕн кирлĕ пулнă Шупашкар РĔК-не?

Ресолютси хумасăр, мĕн тумасăр ку ĕçе тÿрех Халăх сутне йанă пулсан, кам йатланă пулĕччĕ райĕçтăвкома?

Райĕçтăвком пур йалти ĕççене те хăй туса тăма пултараймаст ĕнтĕ. Иалта парттипе комсомол йачейккисем те пур вĕт.

А вот, вулăр комсомолĕссемпе партти кăнтитатчĕсем мĕнле ĕçленине!..

...Суйлав вăхăчĕ. Раштав та çывхарса килет.

— Прăçнике мĕнле ирттерес?—тет комсомол йачейкин çекреттарĕ Петров.

Нумай шухăшларĕ вăл. Партти членне кĕрес текен кăнтитат Сахарăв пулман пулсан, ĕç тухмасчĕ те пулĕ...

— План тăвас, терĕ Сахарăв.

— Тавай!—терĕ Петров.

Çыраççĕ:

1) Кашни çамрăкран 3-шер кĕренкке салат пуçтарас.

2) Ку салатран Сахарăв лаççинче сăра тăвас.

3) Иулашки йулнă салатран пĕр четвĕрт самокон йухтарас, т. ыт. те.

«Сăра тăвас та, пĕр четвĕрт самокон йухтарас»!

Çав вăхăтра йалти виçĕ куштан ĕçлеççĕ те ĕçлеççĕ. Шупашкар РĔК-ĕ: «поручить расследовать»—тесе ларат, Сахарăвсем пĕр «четвĕрт самокон йухтарас»—тесе план çырса лараççĕ.

Ку статйана вуласа тухĕç те ĕнтĕ, виç тăват уврешгенире: «поричить расследовать» тесе хурĕç. Ĕçĕ каллех виç уйăха йулĕ. А.

# Çĕнĕ „коропейнĕк“.

Шупашкарта халĕ Çĕнĕ Комиссариат ĕçлет. Кун пек çĕнĕ майпа ĕçлекен халиттен те пулман. Увăн çурчĕ те, укçи-тенки те, машинистки те, „тела“ сем те пурте пĕр порт ĕл те. Çак Комиссариат кулен 7—8 пÿлĕме шуса çитет.




**Комиссарĕ** (йурлат):

— „Нынчĕ çтеç, сахтра там!..
Все тавары расложу у-у“!..

# Литтераттурă лаххане.

Ианкасăн «Иантрамасť тек купăс уççăн» сăввинţе («Сувтал» 2-мěш №) пěр комсомолккă хăйěн патша вăхăтěнţи пурнăçне аса илет те, çапла калаť:

«...Ěлěк ţух еп васкăнланнă:
Тарçăра çўреве...
Пěţěкрен ман пуç пăţланнă:
Т рăна ěнеппě».

Революцсиţţен тарçăра пурăнма пулгарнă хěр халţţен каţţа кайса аţаллă пулнă ěнтě. Ађи те, Ианкас пек, комсомола кěнě пуђ. Каţţа кайман пулсан, революцсиţţенех, ўссе çитнě хěре, Ианкасăн, парттийе кěртиеллеţţě:—шавţăклăрах сăвă пулаţţě.

Иссайěв М. «Çулăм и йал» повěçěнţе («Сувтал» 1,2-мěш №№) псаширски пойěс Иалапукана тухса кайаť станцсаран. Çемафорě «хěрлěллě шурăллă çуватне çўлелле тăратса» йулаť.

— Ну,—терěм,—крушшеви пулатех: çемафор «çуватне çўлелле çěклеви»—леш йенţен пойăс тухнине пěлтерет. Стантса наţаљнěкě ма пойăса хирěç пойăс кăларса йанăха?—тетěп.

Вěçнех в ласа çитрěм. Крушшени каţки,—ним те çук. Крушшеви пуласса кěтни те ахалех пулţě Ăна иккен, Иссайěв илемлěхшěн кăна «çўлелле» çěклеттернě. Аван повěç. Стантса наţаљнěкěн, йе с релăшнěкěн ку повěçě вуласа тухсан, çўçěсем виреллех тăмалла,—хă ушă повěç.

# Ăйăрлăçуна.

Шупашкара айероçунасем килмелле теççě, анţах вăл мěн иккенне йалсенţе нумайěшě пěлмеççě.



— Макçăм пиţţе, есě Шупашкара хăçан кайатăн?

— Хаљ каймастăп. Шупашкара ăйăрлăçунасем килмелле, теççě те, таптаса кайěç тата.

ÇИНУС.

## Тўрлетейменскер.

— Миçе ерне ěнтě вар ыратнипе тухтăрсем патне çўретěп. Пěртте усси çук.

— Путылккă лартса пăхмарăни? Пирěн асанне çавăн пек ђух пулштух кěленђине вěрилентерсе лартаканђђě.

— Каккуй пулштух! Ђетвěрт ěçсе те пулăшаймарě. Ианттар.

# Укçа пури?

— Тан... тан... тан!—тутарса, Турхан ţиркěвěн ţанě сывлăш çурса, сывăхри йалсем тăрăх саса ţуптараť. Картлă кěвенте пек кукăрăлса хытнă карţăксем, ţапрас тувкага пек тайăлнă стариксем, çут колушлă «ырçын» аţисем, пурçăн тугăрлă усламăç тавраш хěрěсем утаççě ţиркěве.

Лартаççě çурта. Пěшкěнсе, куклеисех пуç çапаççě.—Турă каçараť, теççě пулас.

Пуп илěргет: рай сунаť. Укçа пулсан, рай та пур—пуп пулсан, тавра та ухмахсăр мар. Çўрěр, çўрěр ţиркěве!..

Пуп укçана пуççапаť, усламçă тупăма тархаслаť, çут колушлă «ырçын» аţи, унпа майлă усламçă хěрě кěлě тăваççě, пěрне пěри вăрт ăн асăрхаман пек пăхаççě: савни савнине курма пына!..

Турханга (Хěрлě ţутай р нě) 3 çул ěнтě тўрăсăрсен крушокě ěçлет; ţленěсем кěлле çўреççě, килěсеве пуп кěртсе усалтан тасаттараççě. Ак, ţухăнсем 45 кил (тўрăсăрсен крушокěн ţлен маррисемех) Ђиркўрен те, пупран та сивěнне: !

— Кирлě мар пуп теççě.

Турханти турăсăрсен крушокě ма çак ţухăнсенţен пример илместши? Иглěрха!.. Ку ěçе çийелтен, планне анţах тумастăр пулě те?.. Комсомол йаţейкки çыруçě, есě хăвăн килне пупсене ан кěртха! Есě пупсемпе лайăх пулса «усалтан тасатма» пўртěнте кěлгутарнипе пуйансем йал тăрăх сăмахсем çўрегеççě, ţухăнсем те ěс çапла-шăн--питех тарăхаççě.

Вулав çурţěн пуçлăхě! Есě те киревсěрле хăтлана пуçларăн. Кěркуннерен варах йалсем тăрăх ратио лартма укçа пуçтартăн. Хăшě 50 пус, теприсем 1 тенкě, 2 тенкěшер панă. Турханта, Лутрапантăкра, Уйпуçěнţе, Çěнирţемесре пухнă укçапа прийомнěк туйантăн, ытти пайěсене (кивěскерсене) хăвăннех йатăм, тетěн. Ку «ытти пайěсемпе» укçа йулţě пулě?...

Ма ěс, тата:—Укçасăр ратио итлеттерместěп,—тесе кашкăрашатăн? Пупсем:—«Укçа пуртăк, тура пур»,—теççě пулсан, санăн—«Укçа пуртăк, ратио пур.—тени пулмасťи?

Тан... тан... тан..!—тутарса, Турхан ţанě сывлăш çурса, йалсем тăрăх саса ţуптараť. Тěнпе кěрешекенсем анасла анасла ţиркěвелле утаççě... Вулав çурţěн пуçлăхě ратио итлеме пыракансенţен:

— Укçа пўр-и?—тесе ыйтаť. Калай.

## Аван иртрě.

— Çăварни аван иртри сирěн?

— Калама та çук ěнтě. Ěçкě, çапăçу... И-ех, кăна!

— Пирěн çапăçу сахал вара,—сăнсасене çеç кăваслярěç.

# ЛЕШ ТӖНЂЕ.

(«Капкӑн» ӑмӑртуне).

Ӑслӑлӑх та йӑнӑшат̆:—леш тӗнђе ҫук, тет. Вӑл тӗрӗс мар,—пур вӑл леш тӗнђе.

Пӗрре уйав кунӗ, пирӗн йала пуштӑна килђетсӗр, маркӑсӑр ҫыру килђӗ. Хӑйне «Тайапа Пӗрҫетаттӗлне», тесе атрӗсленӗ.

Ялсовет пӳрђӗ ҫыныран йалан пуйан. Ђӗлӗм тӗтӗмӗ те ҫуках мар.

Пӗрҫетаттӗл Пуртнух ҫырӑва илђӗ те, халӑх умӗнђех вула пуҫларӗ:

—Письмо из загробной жизни, терӗ.

Ватӑ стариксем ђӗлӗмӗсене ҫӑварӗсенђен кӑларса, пӗр-пӗринђен ӑнланмасӑр ыйтаҫҫӗ:

— Мӗн тени пулат̆ вӑл?

— Леш тӗнђерен килнӗ ҫыру, тени пулат̆, терӗ те малалла ђӑваш ђӗлхипех вулама тытӑнђӗ: «Ђи пирвайах хамӑр пурнӑҫ ҫинђен пӗлтерес, тетӗп.

Епӗр пурте вӑхӑтсӑр вилнӗ ҫынсем ҫут тӗнђере ђурара пурӑннӑ пулсан та, ку тӗнђере пурӑнӑҫ аван-ха.

Ленин кунта куҫнӑранпа комуниссен парттийӗ хӗрӳлӗ ӗҫлет. Партти тӑрӑшнипе нумайах та пулмаст̆ хӑватлӑ хум пулса иртрӗ.

Тамӑк хуранне ҫапса салатса, катӑкӗсене ђукун шӑратакан савӑта ӑсатрӗҫ.

Унтан, тамӑкран тухнӑ хура халӑх рай хапхи йеннелле сулӑнђӗ.

Райа ҫӑмӑллӑн илме пулмарӗ. Ултӑ уйӑх та ҫиђӗ кун, пӗр ђарӑнмасӑр ҫӗрӗн-кунӗн ҫапӑҫрӑмӑр...

Пӳртре шӑпӑрт. Вулама пуҫлансанах ђӗлӗм ђӑпӑк ђаплатнӑ сасӑсем илтӗнкелеђђӗҫ, халӗ вӗсем те ҫук. Пӗрҫетаттӗл сасси ҫеҫ илтӗнет...

«...Ҫиђђӗмӗш кунӗнђе рай патшалӑхне тӗпӗ тымарӗпе хамӑр алла илтӗмӗр те райра пуҫлӑхсем пулса пурӑннӑ ҫынсене сут пулђӗ.

Турра персе вӗлермелле тунӑђђӗ те, ватӑ тесе ҫӑмӑллатрӗҫ: вунӑ ҫула хапха хуралӗнђе лармалла турӗҫ. Ывӑлне те сут тӑвасшӑн хытӑ шырарӗҫ, анђах ҫуралман йа палана тупаймарӗҫ.

Кавӑрле архханкӗлӗ телейлӗ пулђӗ: анкӗлсем ҫиве утланса вӗҫсе кайнӑ. Иероп-ланпа хӑваласа та тытаймарӗҫ.

Аппустӑлсемпе ерххелейсене тӳлевсӗрех ђӑпта ҫлпгарма ӑсатмалла турӗҫ.

Илйе прурукне питӗ сехӗр сут пулмаллађђӗ, анђах вӑл пилӗк кун ҫухалса пурӑнђӗ.

Асар-писер, ӳсӗрӗнђен урӑлмасӑрах, тусан тӑман кӑларттарса, турӑ арӑмне лартса аслати авӑттарма тухса кайнӑ пулнӑ.

Каҫпи тивӗҫӗ тӗлӗнђе турӑ арӑмӗ—Марийене пуҫхӗрлӗ ӳкерсе хӑварнӑ. Анкӑ-миннӗ, авни хӑй ҫумӗнђен ӳксе йулнине те сисмен.

Ҫыру тӑрӑх куратӑр: епӗр кивӗ тӗнђене ҫапса салатса, ҫӗнӗ пӗрђи пек тӗпретсе, ҫӗнӗ-Канаш ирӗкӗ туса лартрӑмӑр. Малашне пурнӑҫ лайӑх пулӗ тесе шутлатпӑр.»

Ҫыру айне тӗкӗл арӑмӗ Мат̆руна тесе, алӑ пуснӑ.

Ҫырӑва вуласа пӗтерсен нумайђђен ђӗнмесӗр ларсан, пӗр старик:

— Налока пуҫтарса пӗтерессипе ҫуракине хатӗрленесси ҫинђен ним те каламанҫке, мӗнле пыраҫҫӗ-ши унти ку ӗҫсем?—терӗ.

Налок ҫинђен асӑннӑран:

— Ку ӗҫ пирӗн те аванах пымаст̆ха. Пуҫтарас пулат̆ штолӗ, тесе ӗнсисене хыҫса илђӗҫ.

Вӗренепе П[illegible]рене.

## Арҫынпа танах.

Хӗрарӑмсем арҫынсемпе танаша пуҫларӗҫ. Ђӗлӗм ӗҫпе, усал сӑмахсем йенђен те арҫынсенђен пӗртте йуласшӑн мар.

(Камака умӗнђе илтӗннӗ сӑмахсем).



— Активисткӑ (Кӑвак тӗрӗм ҫӗнӗ пӑхса):

— Хулара курса килнӗрен—пайан перусе туртрӑм та, арҫынсемпе танашнӑлнах туйӑнђӗ. Халӗ хӗрарӑм кунӗ тӗлне 3 стайка ҫырмаллӑх вӑй илтӗм...

# Телейлӗ çынсем.

Мартӑн 15-мӗшӗнҫе «Канаш» хаçатӑн пысӑк выҫавӗ пулса иртрӗ. Унта «Капкӑн» потписҫӗнӗсем çак йапаласене выҫаса илнӗ.

**Тимӗр сӳре:**

4874 Орлов Л., Уравӑш, Вӑрнар р.

**Çава:**

10665 Питтейӗвӑ, М. Т, Ҫашлама, Куславкка р.

**Тутӑр:**

18468 Илларнонӑв Л., Ҫураҫ, Шупашкар р.

**Çурла:**

10104 Афишкӗн П., Муҫей, Хӗрлӗҫутай районӗ.

10066 Ишуткӗн П., Тумпарла, Пукуҫма канттунӗ, Тутар респ.

4771 Вӑрманкас, Шупашкар р., Хӗрлӗ кӗтес.

4893 Никколайӗв А., Анат Кармал, Пушкӑрт респ.

**Пахҫа-çимӗç вӑрлӑхӗ:**

4829 Моҫаров И., Мӑн Камай, Сӗнтӗрвӑрри р.

4936 Антрейӗв Т., Силхуракасси, Шупашкар р.

Ку таплитсӑна пуштӑ урлӑ хаçат çырӑнса илнисем кӗмеççӗ.

Выҫав тӑрӑх тухнӑ йапаласене таплитсӑ «Канаш» çиве çапӑнса пӗтнӗ хыççӑн пӗр ернерен пама пуçлаççӗ. Памалла йапаласене Шупашкарти потписҫӗксене Шупашкартах, вырӑнтисене—вырӑнсенҫе кивçевлӗх йулташлӑхӗсем параççӗ.

---

# пӳртпе лашана выҫаса илетех.

„Капкӑн“ çырӑнса илекен

# 1929

*çулӑн ТЕККАПӖР уйӑхӗнҫе „КАНАШ“ ретакси ҫӑваш хаçат шурналӗсене çырӑнса илекенсем хушшинҫе*

## 2-мӗш ПЫСӐК ВЫҪАВ

туса иртерет.

**5000 ВЫҪАВРА ПУРӖ ХАКЛӐ ЙАПАЛА ПУЛАТ. 5000**

Кашни йапала 1 тенкӗрен кайа мар тӑрат.

Ҫи хаклӑ йапаласем: 1 пӳрт пури 9х9 аршӑн вкçаллӗ (хут тэ хӑш районра та лартса паратпӑр). Йурине лартса, çине тимӗр виттерсех паратпӑр. йе 500 тенкӗ укçа. 1 лаша, йе 150 тенкӗ укçан. Плуксем, сӑмаварсем, путиҫнӗксем т. ур. те.

*ВЫҪАВ пилетне намсем илеççӗ: АПРЕЛРЕН; МАЙРАН, ИЙУҤРЕН пуçласа*

ПИРӖН ЙАЛ 12 уйӑха çырӑнса илекенсем 1 пилет; КАНАШ 3 уйӑха çырӑнса илекенсем 1 пилет, 6 уйӑха—2 пилет, 12 уйӑха—4 пилет; ÇАМРӐК ХРЕСҪЕН 6 уйӑха çырӑнса илекенсем 1 пилет, 12 уйӑха—2 пилет; СУНТАЛ 6 уйӑха çырӑнса илекенсем 1 пилет, 12 уйӑха—2 пилет; КАПКӐН 12 уйӑха—1 пилет; ҪӐВАШ ЙАЛӖ 12 уйӑха—1 пилет; ХАТЕР ПУЛ 12 уйӑха—1 пилет; ХАЛӐХА ВӖРЕНТЕС ӖÇ (Çутӗç Комиссариаҫӗ кӑларакан шурнал)—12 уйӑха çырӑнса илекенсене 1 пилет, „ӖÇХЕРАРӐМӖ“—12 уйӑха 1 пилет.

### ÇЫРӐНСА ИЛМЕ ВАСКӐР!

Потпискӑ пухакансене 20 пилет пуçне 1 пилет хӑйсене паратпӑр.

Укçа куçармалли атрӗс: *Чебоксары, Канашская ул. 15, Конторе газ. „КАНАШ“.*

„Капкӑн“ çырӑнса ил!

# Телейлӗ пулӑн есӗ.

# САТАЂ.



Ҫак ӳкерђӗке лайӑхрах пӑхӑр та, вӑл мӗне пӗлтерни ҫинђен фелйеттон, пӗђӗк шуткине калав ҫырса йарӑр. „Капкӑн" ретаксийӗ.

Зам. Ответ. редактора И. Петров.

Чувашлит № 1168. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга". Тир. 4850 экз.